25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
ОКТЯБРĔН
4
ВЫРСАРНИКУН
232 (6167) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Харпăрхăйĕн политикăллă пĕлĕвĕсене кунран кунах ӳстерсе пымалла

Пирĕн кадрсен хăйсен политикăллă пĕлĕвĕсене яланах ӳстерсе пыма кирлине Ленинпа Сталин пĕрре мар кăтартса панă. Çакăнтан ĕнтĕ парти организацийĕсен кадрсен идейăллă ӳлĕшне хăпартса пырас ĕçе тивĕçлĕ пек йĕркелеме кирли тухса тăрать. 1937 çултах Сталин юлташ пирĕн партин кадрĕсене, аялтан пуçласа çӳле çитиччене, государствăн шалти тата пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăва тĕрĕс ăнланса илмелĕх идеологи тĕлĕшĕнчен хатĕрлеме тата политика тĕлĕшĕнчен пиçĕхтерме кирлине кăтартса парсаччĕ. Пирĕн кадрсенчен «пысăк йăнăшсем тумасăр çĕршыва ертсе пыма пултаракан пиçсе çитнĕ ленинецсем, марксистсем хатĕрлесе çитерме пултарсан, çакна тума пĕлсен, вара эпир пирĕн мĕнпур задачĕсене 9/10 пайне татса панă пулăттăмăр» тенĕ Сталин юлташ. Партин XVIII съездĕнче ЦК ВКП(б) ĕçĕсем çинчен тунă отчетлă докладра Сталин юлташ çакăн пек кăтарту панă: «Партиллĕ пропагандăн задачи, кадрсене марксистла-ленинла воспитани парас задача—пирĕн ĕçĕн пур отраçлĕсенчи кадрсене те общество аталанăвĕн законĕсем çинчен вĕрентекен наукăна алла илме пулăшассинче пулса тăрать».

Общество аталанăвĕн законĕсене пĕлнипе пирĕн кадрсем хальхи вăхăтри обстановкăна, нимĕç фашисчĕсене хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнчи хăвăрт улшăнса тăракан обстановкăна тĕрĕс ăнланса илме пултараççĕ. Çавăнпа та общество аталанăвĕн законĕсене пĕлни халĕ нихăçанхинчен ытларах кирлĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи питех те хăвăрт улшăнса пыракан событисене, ку е тепĕр явлени вăхăтлăха пулнине, ку е тепĕр факторăн пĕлтерĕшне ăнланса илме марксизм-ленинизм теорийĕпе хĕçпăшалланни кирлĕ.

Пирĕн кадрсен пысăк пайĕ вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенчех хăйĕн пĕлĕвĕсене ӳстерессишĕн тăрăшса ĕçлет, ВКП(б) Чкаловски райкомĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацире Кирпичов, Халиков, Шорников юлташсем, Аслă Патăръелĕнчи пуçламĕш парторганизацире—Цветков юлташ «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренсе тухнă. Вĕсем халĕ марксизм-ленинизм классикĕсен уйрăм произведенийĕсене вĕренеççĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи парторганизацире Абрамов юлташ (прокурор помощникĕ пулса ĕçлекенскер) Ленинăн «Материализм и эмпириокритицизм» ятлă произведенине вĕренме тытăннă. Парти историне харпăрхăй тĕллĕн тăрăшса вĕренекенсем сахал мар. Уйрăм парторганизацисем коммунистсене тата партире тăман интеллигентсене большевизм историне учебник тăрăх вĕрентме кружоксем тунă, çав кружоксем йĕркеллĕ ĕçлеççĕ.

Çав вăхăтрах партиллĕ пропаганда ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Хăшпĕр районсемпе хуласенчи парторганизацисем кадрсен политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ, уйрăм районсенче ку енĕпе нимĕн те тумаççĕ. ВКП(б) Шупашкар райкомĕ коммунистсене парти историне вĕренме пулăшас тĕлĕшпе çулталăкра икĕ лекци кăна—«Тĕрĕслĕхлĕ тата тĕрĕслĕхлĕ мар вăрçăсем çинчен» тата «Сталин граждăн вăрçи çулĕсенче» темăсемпе иртернĕ, парти историне вĕренекенсене пулăшма консультацисем иртерни пулман. Коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен вĕсемпе ВКП(б) райкомĕн работникĕсем калаçман. Парти историне вĕренекенсене пулăшу парас енĕпе ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕ 10 лекци, Октябрьски райкомĕ—5, Кувакино райкомĕ—3, Етĕрне райкомĕ—1 лекци иртернĕ. Шăхасан районĕнче вара парти историйĕ çинчен пĕр лекци те пулман. Ытти хăшпĕр районсенче те парти историйĕ тăрăх лекцисем тума пăрахнă.

Иртнĕ çулта кашни районрах «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренекенсен кружокĕсем пурччĕ. Çав кружоксем çине парти райкомĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсем сахал çаврăнса пăхнине пула, вĕсем чылайĕшĕ ĕçлемеççĕ. Калинински, Октябрьски, Çĕрпӳ, Шăхасан тата ытти хăшпĕр районсенче парти историне вĕренмелли кружоксем пачах çук.

Çакăнпа пĕрлех тата çакна палăртас пулать: хăшпĕр райкомсен секретарĕсемпе отделсен заведующийĕсем харпăрхăйĕн пĕлĕвĕсене ӳстерсе пыма кирли çинчен пĕр коммунистпа та калаçман, ВКП(б) райком бюровĕн заседанийĕсенче пропаганда ыйтăвĕсене питех те сахал сӳтсе явнă, çак ĕçе йĕркелесе яма пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсене пулăшман.

Уйрăм районсенче коммунистсем, комсомолецсем тата совет интеллигенцийĕ «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» харпăрхăй тĕллĕн мĕнле вĕреннипе райком работникĕсем интересленмен, пуçламĕш парторганизацисем ку енĕпе мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе пыман. ВКП(б) Чкаловски райкомĕн работникĕсем нумаях пулмасть машинно-тракторнăй станцинчи пуçламĕш парторганизацире тăракан коммунистсем хăйсен пĕлĕвĕсене ӳстерсе пырас тĕлĕшпе мĕнле ĕçленипе паллашнă. Кунти пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Ишмуратов юлташ кăçал хăйĕн идейăллă виçине ӳстерес тĕлĕшпе пĕрре те ĕçлемен. Çавăн пекех ку районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ Ахсянов юлташ та «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» кĕнекене кăçал алла та илсе пăхман.

Уйрăм коммунистсем хаçатсем çырăнса илеççĕ, анчах вĕсене вуламаççĕ. Сăмахран, Шупашкарти Швейпромсоюзри пуçламĕш парторганизацири коммунистка Писарева юлташ хаçат та сайра хутра çеç вулать, вăрçă вăхăтĕнче мĕнле паллă документсем пичетленсе тухнине пĕлмест.

Çапла вара, пирĕн кадрсен политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Çав çитменлĕхсене кĕске вăхăт хушшинчех пĕтерес пулать.

Хăйсен идейăллă виçине хăпартас тĕлĕшпе кашни коммунистăн, кашни комсомолецăн, кашни интеллигентăн кулленех çине тăрса ĕçлес пулать. Идея енĕпе пуян кĕнеке, общество аталанăвĕн тата политикăллă кĕрешӳĕн законĕсене вĕрентекен кĕнеке вăл—«ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ». Ăна яланах тимлĕн вĕренсе пымалла. «Кĕске курса» вĕренсе тухнисем марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене вĕренмелле. Çавăнпа пĕрлех социализмăн политикăллă экономине тата хальхи экономикăна тĕплĕн вĕренме тăрăшмалла. Политикăллă пĕлӳлĕхе пĕрмаях ӳстерсе пыракан пирĕн кадрсем çĕршыв умĕнче тăракан пысăк та йывăр задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пултарĕç.

ВКП(б) райкомĕсен пропаганда ĕçне лайăхлатасси çине ытларах çаврăнса пăхас пулать. Коммунистсемпе комсомолецсем тата интеллигентсем нумайĕшĕ харпăрхăй тĕллĕн вĕреннипе хăйсен идейăллă виçине ӳстерсе пыма тăрăшаççĕ. Вĕсем мĕнле вĕреннипе паллашас, вĕсене вĕренме пулăшас ĕçе ВКП(б) райком работникĕсен куллен туса пымалла. «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» уйрăм сыпăксем тăрăх вĕренмелли кружоксем тата Сталин юлташăн отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи сăмахĕсемпе приказĕсене вĕренмелли кружоксем тумалла. Çав кружоксен ĕçĕсене лайăх йĕркелеме тăрăшмалла.

Общество аталанăвĕн законĕсене пĕлнипе хĕçпăшалланса, эпир гитлерла ирсĕрсене хирĕç çĕнтерӳллĕ вăрçă туса пыма хамăрăн мĕнпур вăйсене пухăпăр, фашистла захватчиксене тĕппипех çапса аркатас задачăна пурнăçа кĕртĕпĕр.

Уяв парнисем хатĕрлеççĕ

СОВЕТСКОЕ, октябрĕн 2-мĕшĕ. (Телефон тăрăх). Районĕпе илсен паянхи кун тĕлне Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 3.250 килограмм тĕрлĕрен апат-çимĕçсем хатĕрленĕ.

Фронтри боецсем патне уяв парнисем хатĕрлесе ярас тĕлĕшпе уйрăмăнах Доронин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем аван ĕçлеççĕ. Вĕсем çак кунсенче 3 килограмм пыл, 3 килограмм çу, 40 çăмарта, 70 килограмм çĕрулми, 20 килограмм купăста, 5 килограмм сухан хатĕрлесе пачĕç. «Радио» колхоз 30 килограмм какай, Молотов ячĕпе тăракан колхоз тĕрлĕрен çимелли япаласем 180 килограмм ярса параççĕ.

Парнесем хатĕрлекен районри комиссие кулленех колхозниксем йышлăн килсе тăраççĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли хатĕрленĕ уяв парнисене пырса параççĕ.

Г. ВОРОНИН,
ВКП(б) райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ.

* * *

ОКТЯБРЬСКОЕ. (Телефонпа). Вăрçăн хаяр кунĕсенче ĕççыннисем Хĕрлĕ Çарпа алла-аллăн тытăнса, тăшмана хирĕç вирлĕн кĕрешеççĕ. Кашни ĕççынни Хĕрлĕ Çара хăйĕн вăйĕ çитнĕ таран пулăшма тăрăшать. Караньялĕнчи «Труд» промартель членĕсем паттăр боецсем валли икĕ мăшăр çăматă, 17 мăшăр чăлха, 6 мăшăр перчатка, 2 кĕрĕк пиншак, 3.760 тенкĕ укçа тата ытти япаласем чылай ярса пачĕç.

Артель членĕ А. Яковлев юлташ 300 тенкĕ укçа, пĕр кĕрĕк пиншак, пĕр мăшăр çăматă, И. Алексеев 300 тенкĕ укçа пачĕç. Вĕсем производствăра та хастарлăн ĕçлеççĕ. Кулленех нормăна 400 процент тултарса пыраççĕ. Сентябрь уйăхĕн планне вĕсем иккĕшĕ те 250-шар процент тултарнă.

Октябрь уявĕ ячĕпе Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне яракан парнесен хисепĕ куллен-кунах ӳссе пырать. Çак кунсенче Кармалти «Звезда» колхоз членĕсем 60 килограмм шурă çăнăх, 5 килограмм махорка, 400 тенкĕ укçа, Анат Кушмари «Комсомолец» колхозри колхозниксем 20 килограмм какай, 3 центнер купăста, 50 штука çăмарта, 400 тенкĕ укçа, Кив Тукайри «Сталь» колхоз членĕсем 100 штука çăмарта, 200 тенкĕ укçа ярса панă.

В. НИКИТИН.

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ĔРЧЕТЕС ĔÇРИ ÇĔНĔ ÇИТĔНӲСЕМШĔН

Тăвай районĕнчи колхозсем, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. «Культура», «Искра Ильича», «Новый путь», Мичурин ячĕпе тăракан, «Свободный труд», Чапаев ячĕпе тăракан, Ворошилов ячĕпе тăракан «Трудовой путь» тата малта пыракан ытти хăшпĕр колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1942 çулхи государство планне иртерсе пурнăçларĕç. Район октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 99 процент, сурăхсемпе качакасем енĕпе 98,2 процент, сыснасем енĕпе 120,6 процент, лашасем енĕпе 83 процент, кроликсем енĕпе 70 процент тата хурт-хăмăр çемьисене йышлантарас енĕпе 76 процент тултарнă.

Нумай колхозсем фермăсене выльăхсем илсе тултарас тĕлĕшпе сентябрь уйăхĕнче пысăк ĕç туса иртерчĕç. Сентябрь уйăхĕ хушшинче колхозсен фермисем валли çĕнĕрен ĕне-пăрусем 653 пуç, сурăхсемпе качакасем 1.230 пуç, сыснасем 174 пуç тата чăх-чĕпсем 1.227 пуç илнĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пĕтĕмĕшпех тултармашкăн районри колхозсен татах хăйсен фермисем валли майракаллă шултăра выльăхсем 28 пуç, сурăхсемпе качакасем 52 пуç, чăх-чĕпсем 2.763 пуç илмелле пулать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ăнăçлăн тултарас тесен, çамрăк выльăхсене тĕрĕс пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе колхозсен те, колхозниксен те çине тăрса ĕçлемелле. Апла пулин те, хăшпĕр колхоз руководителĕсем выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерес ĕç çине çиелтен пăхаççĕ. Выльăхсене начар пăхнине пула Нюшкасси колхозĕнче пăрусен 40 проценчĕ, Уразлино колхозĕнче 55 проценчĕ, Амалыкри колхозра 27,4 проценчĕ вилнĕ. Çакă ĕнтĕ çамрăк выльăхсене тĕрĕс пăхса çитĕнтерес ĕç çине колхоз председателĕсем ответсăррăн пăхнинчен, фермăсенче ĕçлекенсем хăйсен ĕçне çиелтен çеç туса пынинчен килнĕ.

Выльăх-чĕрлĕхсен продуктивноçне ӳстерессиі—вĕсем валли хĕл каçма лайăх витесемпе çуртйĕрсем хатĕрленинчен килет. Ку тĕлĕшпе те районри колхозсем начар ĕçлеççĕ. Районĕпе илсен, 1.029 ĕне, 230 сысна, 1.570 сурăх, 130 пăру, 1.063 чăх валли хĕл каçма çуртйĕрсем хатĕрлемен. Колхоз руководителĕсем çакăн пек чăтма çук япăх ĕçе курса тăраççĕ пулин те, витесене юсама тытăнмаççĕ-ха. Çĕнĕрен тума палăртнă витесенчен пĕрне кăна (100 пуç кĕмелĕх ĕне вити) тунă. Ыттисене халĕ те тума тытăнман.

Калас пулать, малта пыракан колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе пысăк вырăна хураççĕ. «Красная Чувашия» колхозра сыснасем валли 135 пуç кĕмелĕх, ĕнесем валли 70 пуç кĕмелĕх стандартлă вите юсаса пĕтернĕ, кунсăр пуçне тата 50 ĕне, пĕр пин чăх кĕмелĕх витесем юсама тытăннă. Çавнашкалах Йăнтăрч, Нишер тата ытти колхозсенче те витесене юсаса çитерсе, дезинфекци туса тасатнă.

Хăшпĕр колхозсем выльăх-чĕрлĕхсем валли апат-çимĕç хатĕрлес тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ. «Красная Чувашия», «Новый путь», Мичурин ячĕпе тăракан колхозсем силос хывса хăварас плана ăнăçлăн тултарчĕç. Çак вăхăтрах Молотов ячĕпе тăракан колхозра тата Можаркăри колхозра силос хывма тытăнман та. Силос хывас плана 32 колхозран 15 колхозра çеç пурнăçланă. Районĕпе илсен, силос хывассине 57 процент кăна тултарнă. Çакă вăл выльăх-чĕрлĕхсем валли çителĕклĕ таран апат хатĕрлесси çине райçĕрĕç пайĕн работникĕсемпе колхоз председателĕсем çиелтен пăхнинчен килнĕ.

Выльăх-чĕрлĕхсем валли ăшă витесем, апат-çимĕçсем хатĕрлес ĕçсене çитес кунсенчех вĕçлемелле. Ку тĕлĕшпе партипе совет активĕн ĕçе ертсе пымалла.

А. САЛМИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Пирĕн çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем

ЭЛĔК, октябрĕн 2-мĕшĕ. (Телефон тăрăх). Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, кăçалхи çул районри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе чылай палăрмалла ĕçсем турĕç. Майракаллă шултăра выльăхсем ĕрчетес тĕлĕшпе илсен, район плана 99 процент тултарчĕ. Çапла вара иртнĕ çулхипе танлаштарсан, кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне шултăра выльăхсен йышĕ 33 процент ӳснĕ. Сыснасем ĕрчетес плана колхозсем 154 процент, сурăхсем ĕрчетессине 95 процент тултарчĕç. Анчах та сурăхсем ĕрчетес тĕлĕшпе çителĕклĕ таран ĕçленĕ тесе калама çук-ха, плана тултарма халĕ тата 264 пуç сурăх çитмест.

Кăçал выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекенсем чылай паха çитĕнӳсем турĕç. Анаткасри Калинин ячĕпе тăракан колхозра Т. Трофимовăпа Е. Ефимова 35 пăрăва тĕрĕс пăхса çитĕнтерчĕç, Смородинăри «Коминтерн» колхозри шкул ачи П. Скворцов 25 сысна çури, «IX съезд ВЛКСМ» колхозри ферма заведующийĕ Ф. Егоров юлташ 180 сысна çури, «Трактор» колхозри К. Михайлов 196 сысна çури, 34 путек тĕрĕс пăхса çитĕнтернĕ. Районра çĕнĕрен 9 ферма организациленĕ.

Районри 92 колхозран 39 колхоз виçшер ферма енĕпе, 26 колхоз икшер фермăри выльăхсем енĕпе государство планĕсене тултарнă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тултарас шутпа районри колхозсем сентябрь уйăхĕнче 453 пăру, 60 сысна, 762 сурăх туяннă.

Анчах та выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕç районра пачах та çителĕксĕр пулса пырать. План тăрăх колхозсенче 273 вите юсаса хатĕрлемелле пулнă пулсан, 57 витене çеç ремонтласа хĕле хатĕрленĕ. «Красное Сормово», «Большевик» тата ытти колхозсенче те выльăх-чĕрлĕхсем валли витесем хатĕрлеме тытăнман.

М. КУЗЬМИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Республикăри колхозсенче аван çапас, çĕрулми кăларас тата кĕрхи сĕртме тăвас ĕçсем октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕнле пулса пынине кăтартакан

СВОДКА

Районсем	Аван çапнă (процентпа)	Çĕрулми кăларнă (процентпа)	Кĕрхи сĕртме тунă (процентпа)
Пăрачкав	76,2	84,7	11,4
Красноармейски	69,1	67,6	10,2
Шупашкар	66,4	98,3	29,3
Канаш	65,5	100	36,2
Кувакино	64,6	100	5,4
Шăхасан	63,1	100	28,9
Йĕпреç	62,4	95	13,9
Çĕмĕрле	62,2	100	23,5
Ишлей	61,5	98,8	16,9
Сĕнтĕр	60,7	92,9	26,8
Тăвай	60	100	29,3
Элĕк	58,7	100	22,2
Первомайски	58,7	100	16
Комсомольски	58,2	98,1	19,9
Етĕрне	57,3	100	26,9
Çĕрпӳ	57,1	93,2	24,5
Вăрнар	56,6	95,4	23,6
Чкаловски	55,8	100	16,8
Вăрмар	55,6	95,1	20,5
Хĕрлĕ Чутай	55,3	100	29,8
Шăмăршă	55,1	91,3	10,4
Сĕнтĕрвăрри	53,1	91,7	26,1
Калинино	52,6	98,8	29,2
Куславкка	50,4	85,1	25,8
Октябрьски	49,7	93,3	23,6
Улатăр	45,7	100	15,9
Советски	43,5	95,6	16,3
Елчĕк	42,6	98,7	21,1
Шупашкар хули	58,5	100	62,8
ЧАССР тăрăх	57,7	94,6	21,3
Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пулнă	54,4	79,5	14,4

Учет ĕçне лайăхлатмалла

КАЛИНИНО. Колхозниксем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсене тĕрĕс шута илсе пырасси — колхоз счетовочĕсемпе бригадирсен тĕп задачи пулса тăрать. Ăна кулленех тата тĕрĕс туса пымалла. Шуркассинчи «Социализм» колхозăн счетовочĕпе бригадирĕсем çакна лайăх ăнланса илнĕ, вĕсем учет ĕçне аван йĕркелесе пыраççĕ. Колхозниксем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсене бригадирсем 5 кунран кая хăвармасăр çырса параççĕ, счетовод вĕсене ĕçкунĕсене шута илмелли «лицевой счет» кĕнеки çине çырса пырать. Кунсăр пуçне, колхозниксем кашни эрнере, кашни уйăхра мĕн чухлĕ ĕçкунĕ ĕçлесе тунине кăтартакан сводка çырса çакаççĕ, вăл колхоз правленинче стена çинче çакăнса тăрать. Çапла, мĕçе ĕçкунĕ ĕçлесе туни кашни колхозникшĕн паллă, ку вăл колхозниксен ĕçлес кăмăлне хăпартать.

Анчах та районри хăшпĕр колхозсенче колхозниксен ĕçкунĕсене шута илес ĕçе чăтма çук япăх туса пыраççĕ. Чăрăш Шĕнерти «Красноармеец» колхозри иккĕмĕш бригадăн бригадирĕ И. Галкин колхозниксем ĕçленине йĕркеллĕн çырса пымасть, ĕçкунĕсене уйăхран уйăха çеç çырса пырать е пачах та çырса пымасть. Колхоз счетовочĕ колхозниксем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсене шута илсе пымалли «лицевой счет» кĕнеки çине кăçал тунă ĕçкунĕсене пачах çырман. Колхозниксем хăйсем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсен шутне пĕлмеççĕ.

Бригадир Галкин хăйĕн ĕçне ответлăха туйса туса пыманнипе бригада уборкăра юлса пырать. Кĕлтесене капана халĕ те хывса пĕтермен, çĕрулми кăларасси те тăсăлса пырать. Государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татас ĕçре бригадирăн организатор пулмалла, Галкин юлташ ĕçе организацилеме тăрăшмасть.

Г. МАТВЕЕВ.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Плана тултарман работница çук

КУСЛАВККА, октябрĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). «Прогресс» промартель Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса ĕçлесе, сентябрь уйăхĕнче паха çитĕнӳсем турĕ. Уйăхри плана артель членĕсем тăрăшса ĕçлесе 145 процент тултарнă, кварталри плана 120 процент тултарнă.

Социализмлă ăмăртăва хутшăнса ĕçленĕ май, артельри уйрăм стахановецсем лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç. Левицкая юлташ ăмăртăва туха уйăхри плана 115 процент тултарма сăмах панă пулсан, вăл сентябрь уйăхĕнче плана 142 процент, Моисеева 150 процент вырăнне 210 процент, Маркина 238 процент, Михайлова 248 процент, ватă работница Тухланова 145 процент, Фролова 167 процент тултарчĕç.

Федорова юлташ малтанхи вăхăтсенче хăйĕн планне тултарса ĕçлеймен. Социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн вăл уйăхри плана 150 процентран кая мар тултарса пыма обязательство илнĕччĕ. Илнĕ обязательствăна вăл сентябрь уйăхĕнче 283 процент тултарчĕ. Артельре плана пурнăçласа пырайман пĕр работница та çук. Кашни работница уйăхри плана 150—200 процент чухлĕ тултарса пыма обязательство илнĕ. Çак обязательствăсене октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне чыслăн пурнăçлама тăрăшаççĕ.

И. ШАРКОВ.

ХĔЛЕ КĔМЕ ХАТĔР ПУЛМАЛЛА

КАЛИНИНО. Чăваш АССР Совнаркомĕн 1942 çулхи июлĕн 31-мĕшĕнче кăларнă постановленийĕ тăрăх, учрежденисемпе предприятисен харпăрхăй вăйĕпе хăйсем валли вутă хатĕрлемелле. Постановление пурнăçа кĕртсе пырса, районри предприятисемпе учрежденисем харпăрхăй вăйĕпе ĕçлесе хăйсем валли çителĕклĕ таран вутă хатĕрлерĕç. Районри больницăра ĕçлекенсем пурĕ 300 кубометр, ачасен санаторийĕ 500 кубометр, районри финанс пайĕ 50 кубометр вутă касса хатĕрлерĕç.

Анчах та хĕл каçма кирлĕ вутта районĕпе паянхи куна пурĕ те 34,19 процент çеç хатĕрленĕ. Чылай учрежденисем вутă хатĕрлеме тытăнман та-ха.

Б. ШОРНИКОВ,
В. ЗАЙЦЕВ.

Пропагандăпа агитаци ĕçĕнчи работниксен семинарĕ

Çак кунсенче ВКП(б) Чăваш Обкомĕ парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсен тата районсемпе хуласенчи парткабинетсен заведующийĕсене пухса виçĕ кунлăх семинар иртерчĕ.

Семинарта пурĕ 46 çын пулчĕ. Вĕсем тĕрлĕ темăсемпе лекцисем итлерĕç. Сăмахран, «Отечественнăй аслă вăрçăн хальхи саманчĕ тата пирĕн умри задачăсем», «Лăпкă океан çинчи вăрçă», «Чăваш халăхĕн боевой традицийĕсем» тата ытти ыйтусемпе те.

Семинарта ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Белков юлташ ялхуçалăх çулĕн хăшпĕр итогĕсемпе малашнехи задачăсем çинчен доклад туса пачĕ. Çавăн пекех Чăваш республикин экономики çинчен тата вăрçă условийĕсенче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренме çирĕппĕн тытăнма кирли çинчен те докладсем пулчĕç. Профессор Рахманова пропагандистăн е агитаторăн халăха ăнланмалла чĕлхепе ăнлантарса памалли çинчен калаçу иртерчĕ.

Семинар хыççăн ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсен тата районсемпе хуласенчи парткабинет заведующийĕсен канашлăвĕ пулчĕ. Унта ВКП(б) Канаш хула комитечĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ Иванов, Куславккаран — Шидловский, Кувакинăран — Вишневский юлташсем хăйсен ĕç опычĕсем çинчен каласа кăтартрĕç. Вĕсен калаçăвĕсенчен хуласемпе ялсенче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренесси япăх пыни палăрчĕ.

Канашлу вĕçленес умĕн ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ М. Андреев юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче пропагандăпа агитаци тĕлĕшпе хальхи вăхăтра тумалли ĕçсем çинчен чарăнса тăчĕ. Уйрăмăнах Андреев юлташ большевизм историне вĕренес ĕçе вăраха ямасăр вăйлатма кирлине асăрхаттарчĕ.

Е. ВАСИЛЬЕВА.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Сталинградшăн пыракан çапăçусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Сталинградшăн пыракан хаяр çапăçусем вăйланнăçемĕн вăйланаççĕ. Тăшман завод районĕнчи участоксенчен пĕринче уйрăмах вăйлăн хĕсме пуçланă.

Н-ски гвардейски чăсăн войскисем йышăнса тăракан позицисене тăшман татти-сыпписĕр атакăлать. Кашни атакăрах гитлеровецсен питĕ нумай юн тăкăнать, анчах нимĕçсен командованийĕ, çухатусене пăхса тăмасăр, çапăçăва çĕнĕрен çĕнĕ чаçсем кĕртсе ярать. Темиçе атака путланса ларнă хыççăн,—çав атакăсенче тăшманăн пехотин пĕр батальонне яхăн пĕтерсе тăкнă,—фашистсем çапăçăва вуншар бомбардировщик кĕртсе янă. Тăшманăн авиацийĕ пирĕн оборонăна массăллăн вĕçсе пырса тапăннă. Самолетсем хӳтĕлесе тăнипе атакăна фашистсен танкĕсем кĕрсе кайнă. Пирĕн боецсем тăшман хĕснине çирĕппĕн кĕтсе илнĕ, гитлеровецсен атакисене сирсе пăрахнă, противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 700 çынна вĕлернĕ тата темиçе танк персе çĕмĕрнĕ.

Д. ЩУКИН.

Воронеж районĕнчи çапăçусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Воронеж районĕнче пирĕн чаçсем тăшманăн хирĕç тăма çирĕплетнĕ узелне атакăлаççĕ. Гитлеровецсем, анлăн туса тухнă дзотсемпе, минăсем хурса тухнă вырăнсемпе тата йĕплĕ пралукран тунă картасемпе хӳтĕленсе, вăйлăн хирĕç тăраççĕ.

Пирĕн артиллерирен тата минометсенчен персе, авиаци бомбăсем пăрахса тăшманăн оборонине пĕр тĕлтен шăтарнă. Саперсем минăсем хурса тухнă вырăна сиенсĕрлетнĕ тата йĕплĕ пралук картисене çĕмĕрнĕ. Совет автоматчикĕсем тăшманăн окопĕсене çĕмĕрсе кĕнĕ те нимĕçсемпе штык вĕççĕн тăрса çапăçма тытăннă. Тăшман пысăк çухатусем тӳсет. Красноармеецсем противникăн салтакĕсене пĕр ротăна çитиех пĕтерсе тăкнă.

Кӳршĕри участокра та хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Фашистсен оборонине савăлланса кĕрсе, пирĕн чаçсем нимĕçсене çаврăнса илме тытăннă. Боецсем фашистсен пехотин пĕр батальонне тата минометсен икĕ батарейине пĕтерсе тăкнă.

Пĕр пунктшăн пынă çапăçу вăхăтĕнче нимĕçсем пысăк çухатусем тӳснĕ. Унта пирĕн боецсем 350 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен икĕ дзотне тата темиçе блиндажне çĕмĕрнĕ.

Новороссийск районĕнче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Новороссийск районĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Н-ски чăсăн боецĕсем тăшмана хирĕç çирĕппĕн те паттăррăн кĕрешеççĕ. Хăйĕн позицийĕсене лайăхлатас тесе, тăшман пĕр высотана тытса илме хăтланнă. Высота çинчи окопсенче Калиух лейтенантпа пĕрле пирĕн 7 боец ларнă пулнă. Тăшманăн артиллерийĕ высота çине пеме тытăннă. Артиллерирен çавăн пек вăйлăн пенипе высота çинчи мĕнпур япала çĕрпе пăтранса кайнă тесе шутласа, румынсем пĕтĕм пĕвĕпе ура çине тăнă та çӳлелле утма тытăннă. Противникăн салтакĕсене пирĕн боецсем 7 винтовкăран харăссăн персе кĕтсе илнĕ. Лайăх пытанса ларнă хăюллă боецсем, винтовкăсемпе тĕл персе, тăшмана çĕр çумне лăпчăнтарнă. Анчах та румынсем хăйсен шухăшне пăрахман. Кăштах вăхăт иртсен, вĕсем татах тăвалла шума тытăннă. Красноармеецсен пысăк мар йышĕ тăшманăн 7 хутчен тунă хаяр атакисене ăнăçлăн сире-сире пăрахнă. Саккăрмĕш хут атакăласан кăна тăшман малалла куçса, высотана çаврăнса илнĕ. Совет воинĕсем йĕри-тавра персе тăрса, противникăн йышлăрах вăйĕсене çаплах сире-сире пăрахса пынă. Çавăн пек 18 сехет хушши çапăçнă хыççăн высотана хӳтĕлекенсем патне пулăшу пырса çитнĕ. Пирĕн подразделени, тăшманăнункине татса кĕрсе, фашистсене сирсе ывăтнă. Çав тăвайккинче румынсен 75 вилли тата 2 станковăй пулемет выртса юлнă.

Н. ПУХОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 2-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Октябрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа Сталинград районĕнче тата Моздок районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Октябрĕн 1-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкне çити тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 40 автомашинине ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, артиллерин 11 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче çаплах хаяр çапăçусем пынă. Пĕр участокра противник, пирĕн войскăсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкас тесе, пехотăн тата танксен пысăк вăйĕсене атакăна кĕртсе янă. Пирĕн боецсем тăшман хĕснине парăнман, гитлеровецсен атакисене сирсе янă. Çапăçура противникăн 700 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен темиçе танкне персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем, противникран уйрăм çуртсене тасатса пырса, майĕпен малалла куçса пынă. Урамри çапăçусенче нимĕçсен пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă.

Сталинградран кăнтăралларахра нимĕçсен пехотин пĕр батальонĕ, 50 танк пулăшнипе, пирĕн отряда, противникăн оборони ăшне савăлланса кĕрсе кайнăскерне, атакăланă. Хаяр çапăçура нимĕçсен 16 танкне персе çĕмĕрнĕ хыççăн пирĕн отряд малтанхи позицисене чакнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем активлăн çапăçнă, чылай пунктсенче малалла куçнă. Н-ски соединенин чаçĕсем нимĕçсене çирĕплетнĕ позицисенчен çапса кăларнă, 7 танк, 5 оруди, 13 пулемет тата противникăн пехотине икĕ ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем хаяр çапăçусем хыççăн пĕр высота районне тытса илнĕ. Çавăнта нимĕçсен çĕре алтса лартса огневой точка вырăнне усă курнă 130 çĕмрĕк танкне тытса илнĕ.

* * *

Моздок районĕнче Данилян юлташ командир пулса тăракан чаçăн боецĕсем кун каçиччен противникăн темиçе атакине сирсе янă, нимĕçсен 7 танкне тата 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Моздокран хĕвелтухăçнерехре нимĕçсем пехотăпа мотоциклистсен тата 40 танк вăйĕсемпе пĕр высотана атакăланă. Пирĕн боецсем противника пысăк çухатусем кÿрсе унăн икĕ атакине сирсе янă. Гитлеровецсем çĕнĕ вăйсем илсе пырсан тин вара пирĕн часть çĕнĕ позицисем çине чакнă. Çав çапăçура нимĕçсен 19 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата противникăн пехотине икĕ рота ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем противникпа хаяррăн çапăçнă. Пĕр участокра противник пирĕн оборона ăшне савăлланса кĕрсе кайма пултарнă. Совет чаçĕсем, контратакăсем туса, çав малалла кĕрсе кайнă гитлеровецсене пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсемпе румынсен салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра Гоняев юлташ подразделенийĕн боецĕсем гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 2 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Воронеж районĕнче пирĕн автоматчиксем противникăн пралуклă чăрмавĕ хыçне кĕрсе кайнă та халĕ нимĕçсен оборона районĕ ăшĕнче çапăçаççĕ. Кун каçиччен вĕсем гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Н-ски часть боецĕсем противник пехотин шыв рубежĕ урлă каçнă батальонне аркатса тăкнă. Нимĕçсен каялла чакмалла пулнă, юханшывăн хĕвелтухăç хĕрринче вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсен 400 вилли таран выртса юлнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсен 75-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 203-мĕш полкри нимĕç салтакĕсен ушкăнне тыткăна илнĕ. Тыткăна илнĕ унтер-офицер Генрих Альверс çапла каласа панă: «Пĕлтĕрхи кĕркуннепе хĕллехи çапăçусем пирĕн дивизие юнсăрлатса хăварчĕç. Пехотнăй полксенчи ротăсенче 10-шар, 20-шер çын кăна тăрса юлчĕ. Çавăн хыççăн вара дивизие çĕнĕрен тенĕ пекех пухса йĕркелерĕç. Анчах та малалли çапăçусенче дивизи каллех пысăк çухатусем тÿсрĕ. Апрелĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 3-мĕшĕччен дивизие 12 маршевăй батальон хушса пачĕç. Кашни батальонра 900—1.000 çын пулнă. Дон çинчи çапăçусенче пирĕн полк çынсем тĕлĕшĕнчен те материальнăй часть тĕлĕшĕнчен те йывăр çухатусем тÿсрĕ. Çав çапăçусенче 203-мĕш полкăн командирне Вихман подполковника, 1-мĕш батальонăн командирне Иордан майора, 2-мĕш батальонăн командирне Фитингĕр майора тата ыттисене те вĕлерчĕç. 30 çын тăрса юлнă ротăна чи йышлă рота тесе шутлатчĕç. Сентябрĕн 19-мĕшĕнче пире çакăн пек приказ вуласа пачĕç: юлашки салтак пĕтиччен çапăçас пулать, терĕç. Анчах та вырăссен танкĕсемпе пехоти эпир тăракан вырăна татса кĕрсе кайрĕç те, пирĕн пĕр йĕркесĕр каялла чакмалла пулчĕ. Тепĕр кунне тул çутипе вырăссем пире çавăрса илчĕç, эпир вара тыткăна лекрĕмĕр».

* * *

Курск облаçĕнчи Березовка ялĕнче гитлерла ирсĕрсем хăрушă усал ĕçсем туса пĕтернĕ. Вĕсем хĕспăшалпа хăратса арçынсене, хĕрарăмсене тата çамрăксене 150 çынна фронт тăрăхĕнче укрепленисем тума хăваласа кайнă. Ĕçлесе пĕтерсен, фашистла палачсем çавăнта ĕçленĕ хресченсене пурне те персе пăрахнă.

* * *

Седлец районĕнче (Польша) Польшăри чугунçулсем çинче ĕçлеме нимĕçсем Италирен хăваласа килнĕ железнодорожниксем хушшинче забастовка пуçланса кайнă. Итальянецсем, 500 çынна яхăн, хăйсене халех каялла тăван çĕршыва яма ыйтнă. Гитлеровецсем итальянец-рабочисене кунсерен 14-шар сехет ĕçлеттерессĕ, çавăншăн вара çакăн пек пĕчĕк паек параççĕ: 200 грамм çăкăр тата çĕрнĕ кăшманран пĕçернĕ яшка. Гестапо рабочисене массăллăн тыта-тыта хупать.

Октябрĕн 3-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿрен

Октябрĕн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа Сталинград районĕнче тата Моздок районĕнче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Сталинград районĕнче вăйлă çапăçусем пынă. Дорофеев юлташ командир пулса тăракан [illegible] пĕр çĕре [illegible] противник [illegible] нимĕçсен 200 салтакне [illegible] офицерне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра кĕçĕн лейтенант Матыц ертсе пыракан боецсем нимĕçсен [illegible] пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем активлăн çапăçнă. Н-ски танковăй часть противник тăракан вырăна çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та, персе пырса тата гусеницисемпе таптаса, нимĕçсен 2 танкне, хăй тĕллĕн çÿрекен пĕр орудине, 5 противотанковăй орудине, 9 пулеметне тата 150 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Н-ски чаçăн артиллерисчĕсем нимĕçсен 4 танкне персе çĕмĕрнĕ тата тăшманăн пехотине лартса пыракан 18 автомашинăна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем противникăн пехотине тата танкĕсен атакисене сирсе-сирсе янă. Пĕр участокра пирĕн [illegible] пехотин пĕр ротине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Н-ски соединени нимĕç пехотин темиçе атакине сирсе янă. Çав çапăçура противникăн 360 салтакне офицерне пĕтерсе [illegible], 3 орудие, 9 миномет тата 8 пулемет пĕтерсе тăкнă, 5 танка персе çĕмĕрнĕ тата 20.000 винтовка патронĕ тытса илнĕ.

* * *

Брянск фронтĕнче разведчиксем [illegible]. Лейтенант Клименко [illegible] ертсе пыракан разведчиксем [illegible] пĕтерсе тăкнă. Разведчиксем темиçе нимĕçе тыткăна илнĕ те хăйсен чаçне ăнăçлăн таврăннă. Тепĕр участокра пирĕн пĕр чаçри снайперсем икĕ кун хушшинче 107 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Гварди капитанĕн — Совет Союзĕн Геройĕн Ефимовăн чаçĕнчи (Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕ) 6 летчик сывлăшра противникăн 24 самолетне тĕл пулнă. Совет летчикĕсем çапăçма тытăнса нимĕçсен 6 самолетне пĕтерсе тăкнă, 3 самолетне сиенленĕ. Пирĕн самолетсен çухату пулман.

* * *

Румынсен 9-мĕш кавалерийски дивизийĕн 18-мĕш полкĕн 1-мĕш эскадронĕнчен тыткăна илнĕ ефрейтор Константин Пэун çапла каласа панă: «9-мĕш дивизи Одесса патĕнче хăйĕн [illegible] 1942 çулхи августра [illegible] пирĕн полк малтанхи çапăçусенчех пысăк çухатусем тÿснĕ. 4-мĕш эскадрона çынсен çурри, 2-мĕш эскадрона—виçĕ пайĕнчен [illegible] çапса аркатнă полксене [illegible] Гитлер Антонескурен [illegible] ленни çинчен сăмах çÿрет».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрсем Смоленск облаçĕнчи Чернейкă ялĕнчи çынсене çаратнă, вĕсенчен мĕнпур выльăха, продовольствине тата хаклă япаласене туртса илнĕ. Гитлеровецсем колхозниксен 36 çуртне çунтарса янă, 28 хресчене асаплантарса, персе вĕлернĕ. Нимĕçсен çынвĕлеренĕсем вĕлернисем хушшинче—колхозник Иван Иванович Гвоздев, Петр Николаевич Ильвов тата ыттисем те пур.

Районсенчи ялхуçалăх выставкисен кандидачĕсем

СЕНТЕР. «Çĕнĕ Юнга» колхоз районри ялхуçалăх выставкине выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тунă паха тĕслĕхсемпе тухать.

Вăтă колхозница Ф. Вазикова юлташ сысна ферминче кăçалхипе вуннăмĕш çул ĕçлет. Тăрăшса ĕçлесе, вăл колхозăн фермине çак çулсенче çĕршер сысна çури ÿстерсе панă.

Кăçал Вазикова юлташ хăйĕн ĕçĕнче тата пысăкрах çитĕнÿ турĕ. Хăйне çирĕплетсе панă «Снежинка» ама сыснаран вăл 26 çурă илсе пăхса çитĕнтернĕ, вăл пăхса усранă «Драгун» ятлă ăратлă аçа сыснапа чуптарса, ферма кăçал 100 ытла ăратлă çăвăр илнĕ.

* * *

ЧКАЛОВСКОЕ. Районри ялхуçалăх выставкинче «Правда» колхозăн ĕне ферминче ĕçлекенсем хăйсен паха ĕçĕсене кăтартма хатĕрленеççĕ. Фермăра сăвакан ĕнесем пурĕ 24 пуç, вĕсенчен кăçал вăтам шутпа 1.074-шар литр сĕт суса илнĕ. «Даша» ятлă ĕне талăкне 16 литр сĕт парать. Доярка Матвеева юлташ хăйне çирĕплетсе панă 7 ĕнерен 8 уйăх хушшинче 1.167-шер литр сĕт суса илнĕ, планпа кашни ĕнерен 1000-шер литр суса илмелле пулнă. Кунсăр пуçне, Матвеева юлташ ĕнесен пăрушĕсене лайăх пăхса ÿстернĕ.

«Çăлтăр» колхоз фермин свинарки Демьянова юлташ хăй пăхакан 6 ама сыснаран кăçал 17-шер çăвăр илсе пăхса ÿстернĕ. «Красное знамя» колхозăн сысна ферми кăçал кашни ама сысна пуçне вăтам шутпа 14,4 çăвăр илсе, пурне те пăхса ÿстернĕ. Фермăри чаплă свинарка Куракова юлташ хăй пăхакан 7 ама сыснаран 17,1-шер çăвăр илсе пурне те тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтернĕ. Хăйĕн паха ĕçĕшĕн Куракова юлташ ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх 12 çăвăр илет. Паянхи куна вăл аванс шучĕпе 6 çăвăр илнĕ.

* * *

ÇЕРПУ. Районри ялхуçалăх выставкинче ăратлă лашасем ĕрчетекен колхозсем хăйсен çитĕнĕвĕсене кăтартса параççĕ. Выставка уçăлнă кун районра лашасем ăмăртса чупмалла. Ăмăртура «Новая жизнь», «1905 год», Ворошилов ячĕпе тăракан, «Новая деревня» тата ытти колхозсен лашисем пулаççĕ.

* * *

КАНАШ. Районри ялхуçалăх выставкинче пулма палăртнă «Красная звезда» колхоз кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 14-шар центнер ырашь туса илнĕ. Колхоз пур йышши тырăсен тухăçне те планпа пăхнинчен ытларах ÿстернĕ. Звеноводсемпе бригадирсем хăйсен паха опычĕ çинчен районри выставкăра каласа параççĕ.

* * *

ЕТĔРНЕ. Районри Калинин ячĕпе тăракан колхоз кăçал выльăх ĕрчетмелли государство планне пур выльăхсем енĕпе те иртерсе тултарнă. Колхозăн фермисенче ĕçлекенсем хăйсен паха ĕçĕсене районри ялхуçалăх выставкинче кăтартса параççĕ. Доярка Дербенева юлташ 1942 çулăн малтанхи çурçулĕнче хăй пăхакан ĕнесенчен пурĕ 7.164 литр сĕт суса илнĕ. План тăрăх çак хушăра 5.894 литр суса илмелле пулнă. Е. Шмарина доярка тата пысăкрах çитĕнÿ тунă. Хăй пăхакан ĕнесенчен 8 уйăх хушшинче унăн план тăрăх 10.610 литр сĕт суса илмелле пулнă пулсан, вăл 12.634 литр сĕт суса илнĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем, районри ялхуçалăх выставкисене паха ĕçсемпе тухар! Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXV çул тултарнă ува фронта пысăк пулăшу панипе кĕтсе илер!

955 килограмм шăлан çырли пухса панă

ЕТĔРНЕ. Районри шкулсенче вĕренекенсем эмел курăкĕсем пуçтарма икĕ вырсарникун воскресник туса ирттернĕ. Вăл воскресниксенче вĕренкен ачасем пурĕ 455 килограмм шăлан çырли пуçтарнă. ИванькоВăри туллимар вăтам шкулта вĕренекен пионерсем пурĕ 150 килограмм шăлан çырли пуçтарса панă.

Н. ЛЮБИМОВ.

Ют çĕршывсенче

Швеци полицийĕ иртĕхни

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн Стокгольмри миссийĕ Швецин ютçĕршыв ĕçĕсен министерствине Швеци полицийĕ «Интурист» акционернăй обществăн сотрудникне, совет гражданинне Сидоренкăна, тытса хупнине хирĕçлесе протест панă. Швеци полицийĕ Сидоренко гражданина питĕ киревсĕр тыткаланă. Швеци полицийĕ иртĕхнине мĕнле те пулин ăнлантарса парас тесе пулмалла, Швецин телеграф агентстви пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Унта телеграф агентстви совет гражданинне тĕрĕс мар тытса чарнине Стокгольмра çак кунсенче темиçе совет гражданинне арестленипе çыхăнтарма хăтланать. Совет миссийĕ Швеци влаçĕсенчен Сидоренкăна халех ирĕке кăларма ыйтнă.

„Германие икĕ е виçĕ фронтра çапăçтармалла"

Лондонри „Таймс" хаçатра пичетленнĕ статья

ЛОНДОН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçат иккĕмĕш фронт ыйтăвĕпе умстатья пичетлесе кăларнă. Хаçат Европăн вăтаçĕрĕнче тăракан тата уйрăмшар вăйсене хирĕç кĕрешекен Германин лару-тăрăвĕнчи майлă енĕсемпе майлă мар енĕсене виçсе пăхма сĕнет. Германия çав уйрăмшар вăйсене пĕчченшерĕн çапа-çапа аркатма ĕмĕтленет. Анчах та çав уйрăмшар вăйсем пĕрлешсен, вĕсем Германие пĕтерсе тăкма пултараççĕ, тенĕ çав статьяра. Авторăн шухăшĕпе нимĕçсем вĕсем çине пĕр вăхăтрах темиçе фронтра наступлени пуçласа ярассинчен, урăхла каласан иккĕмĕш фронтран, питех те шикленеççĕ. «Германие хĕвелтăнăçĕнчен сывлăшран пырса бомбăсем пăрахнипех çĕнтерме çук,—тенĕ статьяра.—Вырăссем нимĕçсене татăклăн пыра-пыра çапни çумне Англипе Америкăн çĕр çинчи вăйĕсене хутшăнтарни кирлĕ. Çакă вара вăл хальхи вăхăтри вăрçă уйхирĕсене сарнине е вăрçа чылай малалла аталантарнине пĕлтерет. Германие халех икĕ е виçĕ фронтра çапăçтармалла тăвас пулать».

Германин Норвегири çар чаçĕсенче салтаксем пăлханаççĕ тата хăйсене хăйсем вĕлереççĕ

ЛОНДОН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Германин Норвегири оккупациллĕ войскисенче салтаксем кăмăлсăрланни ÿссех пырать. Тепĕр чухне уççăнах пăлхавсем те пулса иртеççĕ. Салтаксем хушшинче хăйсене хăйсем вĕлересси те йышланнă. Çурçĕрти Норвегире нимĕçсен «пăсăлнă» салтакĕсене, Финляндирен илсе килнĕскерсене, хупма ятарласа концентрациллĕ лагерьсем тунă. Анчах та çав лагерьсем салтаксене «сиплеймеççĕ». Концлагерьсене хупнисем, хăйсене ССР Союзне хирĕç пыракан вăрçă фронтне ан яччăр тесе, хăйсене юри çавнашкал тыткалаççĕ. Пĕр лагерьте фронта кайма килĕшменшĕн кашни çиччĕмĕш çынна персе пăрахнă. Анчах çакă та пулăшманнине пула, гитлерла влаçсем лагерьте юлнă кашни вунă çынран пĕрине пере-пере пăрахнă.

Ослори казармăсенчен пĕринче юлашки эрне хушшинче темиçе салтака персе пăрахнă, хăшпĕр салтаксем хăйсене хăйсем вĕлернĕ.

ЮГОСЛАВИ ПАРТИЗАНĔСЕН КĔРЕШĔВĔ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен илнĕ хыпарсем тăрăх, партизансен отрячĕсем Кутинри нефть промыслисене ăнăçлăн тапăннă. Промысласене сыхласа хуралта тăракан нимĕçсен тата усташасен гарнизонне вĕлерсе тăкнă, промыслисене вут тĕртнĕ. Нимĕçсен оккупанчĕсемпе Павелич бандисем çав пушара ку таранччен те сÿнтереймеççĕ. Пушарта Кутинри нефть промыслисен пур çурчĕсем те, машинисем те çунса кайнă.

Юлашки вăхăтра Итали оккупанчĕсем Словенин партизанĕсем ирĕке кăларнă вăтаçĕрти пайĕ çине вăйлă атакăсем пуçласа янă. Наступленине итальянецсен ултă дивизийĕ хутшăннă, танксемпе артиллери те пулнă. Анчах та уйăх çурă хушши çапăçса та оккупантсем партизансене кăшт кăна сиен кÿме пултарнă, çав хушăрах хăйсем пысăк çухатусем тÿснĕ.

Август уйăхĕн варринче нимĕçсем 20 пин çынна яхăн войскăсен вăйĕсемпе Баняри партизансен отрячĕсем хÿтĕлесе тăракан позицисем çине наступлени пуçласа янă. 15 кун çапăçнă хыççăн тăшманăн хăйĕн атака умĕнхи территорийĕ çине каялла чакма тивнĕ. Баня халĕ те ĕлĕкхи пекех партизансен аллинче. Хорватире партизансем икĕ гарнизона аркатса тăкнă, нумай трофейăсем тытса илнĕ, тăшманăн салтакĕсене 200 çынна тыткăна илнĕ. Тытса илнĕ темиçе вагон тулла халăха валеçсе панă.

ПРАГАРА ГЕСТАПОН ПЫСĂК ЧИНОВНИКНЕ ВĔЛЕРНĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Прагăран илнĕ хыпар тăрăх, унта гестапон пысăк чиновникĕсенчен пĕрине—Алоиз Губера вĕлернĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Англи бомбардировщикĕсем Слунскимри (Голландия) хими заводне тата Гент çывăхĕнчи нефть тасатакан заводa тапăннă. Çав икĕ предприяти çине те бомбăсем тĕл ÿкнине палăртнă.

Октябрĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Фленсбургри подводнăй лодкăсен верфĕсем тата ытти обьектсем çине те бомбăсем пăрахнă. Çавăнпа пĕр вăхăтрах çыранри авиаци противникăн Голланди çыранĕсем çумĕнче тăракан суднисене атакăланă.

ÇЫВАХРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисем сентябрĕн 30-мĕшĕнче ирхине ирех атака пуçласа янă та Мунасиб районĕнче, Египетри фронтăн вăтаçĕрти участокĕнче, кăштах малалла куçнă. Кун каçиччен англичансем çĕнĕ позицисене çирĕплетнĕ, противникăн контратакине сирсе янă. Фронтăн çурçĕрти тата вăтаçĕрти участокĕсенче ĕнер Англи артиллерийĕ противникăн позицийĕсене пенĕ.

Октябрĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле авиацин чылаях пысăк вăйĕсем Тобрука атакăланă. Бомбăсем суднăсем çине тĕл ÿкнине палăртнă. Англи истребителĕсем противникăн пикировка тăвакан бомбардировщикĕсемпе çапăçма тытăннă. Бомбардировщиксен бомбăсене ирĕксĕрех хăйсен войскисем çине пăрахма тивнĕ.

Пĕлтерÿ

«Отечественнăй вăрçăн хальхи саманчĕ» темăпа пулмалли лекци (лекторĕ Юлин юлташ) ĕнер пĕлтернĕ пек Советсен Çуртĕнче мар, ЧАССР Верховнăй Сучĕн заседанисем тумалли залĕнче (Хĕрлĕ площадь)—1942 çулхи октябрĕн 5-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре пулать.

ВКП(б) Горкомĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Пирĕн земляксем

Батальоннăй комиссар Е. Ф. Птичкин

Ăнаткас Хапăсри (Вăрнар районĕ) Чапаев ячĕпе тăракан колхозри Птичкина Евдокия колхозница мухтавлă патриотсем çитĕнтернĕ. Унăн тăватă ывăл. Вĕсем пурте отечественнăй вăрçăн фрончĕсенче нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешеççĕ.

Птичкина Евдокийăн иккĕмĕш ывăлне—батальоннăй комиссара Емельян Филимонович Птичкина нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿ фронтĕнче хастарлăх кăтартнăшăн правительство «За отвагу» медальпе наградăланă.

Вунпĕр çул каярах Е. Ф. Птичкин вăрманта ĕçлекен кадровăй рабочи пулнă. Хутла сахал пĕлнĕ, унăн нимĕнле специальность та пулман. Çапла вăл урăх ĕç çинчен шутлама пултарайман ун чухне.

1931 çул. Лесоруб Емельян Птичкин черетлĕ призыва кĕнĕ. Сывлăх тĕлĕшĕнчен вăл аптăраман, çавăнпа ăна комисси тиркесе тăмасăрах Хĕрлĕ Çарне илнĕ.

— Хĕрлĕ Çар вăл—пысăк шкул, эпĕ çавăнта кăна çын пулма пултаратăп,— тесе тахçантанпа кĕтнĕ хăйĕн ĕмĕчĕ тинех çитнишĕн тем пекех савăннă Емельян.

Хĕрлĕ Çар службинче икĕ çул часах иртнĕ. Ун хыççăн вăл çав чаçах сверхсрочно ĕçлеме юлнă. Рядовой красноармеецран отделени командирĕ, взвод командирĕн помощникĕ пулнă. Хĕрлĕ Çартах коммунистсен партине кĕнĕ.

Унтан вăл малалла ÿссе пынă. Паян Емельян Филимонович Птичкин—батальоннăй комиссар, пĕр чаçăн военкомĕ.

Емельян Филимонович Птичкин отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕнчен пуçласах фронтра. Вăл совет çыннисен пурнăçĕшĕн, тăван çĕршывшăн нимĕç захватчикĕсене хирĕç вăйне шеллемесĕр кĕрешет. Унпа пĕрле отечественнăй вăрçăра унăн виçĕ тăванĕ (пиччĕшĕпе шăлнĕсем) тата пĕтĕм совет халăхĕ кĕрешеççĕ.

«Гитлерла Германи вăрçă туса пырса пирĕн хуласене, ялсене аркатать тата çунтарать, совет çыннисене этемле мар асаплантарса вĕлерет. Вăрçă хаяр. Пире хисеплĕ задачăна пурнăçлама тÿр килчĕ. Эпир нимĕç оккупанчĕсене аркатса тăкатпăрах. Тăван çĕршыва нимĕç аттисен пусмăрĕнчен хăтаратпăр, унтан вара каллех малтанхи пек лайăх пурăнма пуçлăпăр. Вăрçăри çĕнтерÿ ахаль пулмасть. Ăна вăйсене тата пурнăçа шеллемесĕр çапăçнипе çĕнтерсе илмелле. Эпир араслан пек çапăçса кашни кунах тăшман вăйне тата техникине лучăркаса, аркатса пыратпăр. Тăшмана татăклăнах аркатса тăкма пĕтĕм халăх вăйне хатĕр тăратни кирлĕ. Сирĕн, колхозниксемпе колхозницăсен, ывăна пĕлмесĕр ĕçлесе, фронта пулăшассине кулленех вăйлатас пулать». Çапла çырнă тăван ялне ыракан çырусенче Птичкин юлташ.

Военком Е. Ф. Птичкин çирĕп боецсем вĕрентсе хатĕрленĕ. Унăн чаçĕ фронтра паттăррăн кĕрешнĕ. Вĕсем çапăçусенче хастарлăх кăтартса, гитлеровецсене пайтах вĕлерсе пĕтернĕ.

«Манăн кăкăр çинче халĕ «За отвагу» медаль тата петлицăсем çинче икшер шпал. Çаксем мана тата паттăр та хăюллăрах пулма чĕнеççĕ. Правительствăн наградине ответлесе, эпĕ тăшмана çĕмĕрсе тăкас ĕçре хамăн вăя тата пурнăçа шеллемесĕр кĕрешме пулатăп. Пирĕн хамăрăн малашлăха сыхласа хăвармалла», тесе çырать тăван килне Е. Ф. Птичкин «За отвагу» медаль илнĕ хыççăн.

Ефим ВОЛКОВ.

НА ОСНОВАНИИ ПОСТАНОВЛЕНИЯ СОВЕТА НАРОДНЫХ КОМИССАРОВ СССР СБЕРЕГАТЕЛЬНЫЕ КАССЫ НАЧАЛИ ПРИЕМ ВЫИГРЫШНЫХ ВКЛАДОВ.

Тиражи выигрышей по выигрышным вкладам производятся два раза в год.

В каждом тираже на 1000 сберегательных книжек разыгрываются:

1 ВЫИГРЫШ—в размере 200% средней суммы вклада по выигравшей сберегательной книжке;

2 ВЫИГРЫША—каждый в размере 100% средней суммы вклада по выигравшей сберегательной книжке;

22 ВЫИГРЫША—каждый в размере 50% средней суммы вклада по выигравшей сберегательной книжке.

Вкладчику предоставляется право пополнить свой выигрышный вклад или получить его в любое время частями, либо полностью из сберегательной кассы.

ВНОСИТЕ ВЫИГРЫШНЫЕ ВКЛАДЫ В СБЕРЕГАТЕЛЬНЫЕ КАССЫ.

УПРАВЛЕНИЕ ГОСТРУДСБЕРКАСС И ГОСКРЕДИТА ЧУВАШСКОЙ АССР.

ТРЕБУЕТСЯ кладовщик-экспедитор. Оплата по соглашению.

Обращаться: Чувашская. 66. Центоэлектромонтаж, участок № 6.

2—1

ЧЕБОКСАРСКОЙ ТЕХНО-ТКАЦКОЙ ФАБРИКЕ ТРЕБУЮТСЯ:

гл. бухгалтер, помбух, элекмонтеры, женщины и подростки на переквалификацию чернорабочие, охранники. При ф-ке работает столовая и хлебно-продуктовый ларек, одиночкам предоставляется общежитие.

Адрес ф-ки: пос. Волгостроя, помещ. Черепичного з-да, тел. № 7—46.

АРТЕЛИ „КОЖУПРЯЖЬ" ТРЕБУЮТСЯ:

главный бухгалтер, бухгалтера, зав. складом, технички и охранники.

Обращаться: Набережная реки Кайбулки, д. № 21, правление артели. Телефон 6—79.

Центральному Дому Крестьянина

ТРЕБУЮТСЯ:

культработник, дезинфектор, сторожа, уборщица. Общежитие предоставляется. При доме имеется столовая.

За справками обращаться в дирекцию Дома Крестьянина.

ПРОПАЛА КОБЫЛИЦА рыжей масти, на лбу звезда, немного прихрамывает, восьми лет. Задержавшему будет выдано вознаграждение. ЧЕБОКСАРСКИЙ ВИНКОМБИНАТ РОСГЛАВВИНО

2—1

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ:

инженеры и техники-технологи по холодной обработке металла, снабженческие и складские работники, бухгалтеры и машинистки, мастер по камен. и штукатурн. работам, строит. десятник, коменданты общежитий.

Квалифицированные рабочие: токари, фрезеровщики, револьверщики, строгальщики, автоматчики, шлифовщики, слесари, электро-монтеры, штамповщики, установщики штампов, электро-сварщики, резчики, прессовщики, лаковары, литейщики, модельщики, шорники-смазчики, маляры, каменщики, печники, штукатуры, плотники, столяры, упаковщики-плотники, подсобные рабочие, грузчики, свинари, уборщицы, дворники, сторожа, шофера, автослесари, такелажники, жестянщики.

Требуются вахтеры и пожарные работники.

Принимаются переквалификанты (ученики от 16 лет) по указанным специальностям.

Обращаться: улица Карла Маркса, 80, бюро пропусков, от 11 до 3 час. дня.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 948 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.